26-32 343

ЂĂВАШ ОПКОМĔН ХĔРАРĂМ ПАЙĔ

КОРОХХĂВ К.

# ХĔРАРĂМА ŢУРАЛĂХРАН ХĂТАРАССИ

(Ђăвашпа ытти хĕвелтухăç йенђи хĕрарăмсен хушшинђи ĕçсем)

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
ШУПАШКАР—1926.

ЂӐВАШ ОПКОМӖН ХӖРАРӐМ ПАЙӖ

КОРОХХӐВ К.

# ХӖРАРӐМА ЂУРАЛӐХРАН ХӐТАРАССИ

(Ђӑвашпа ытти хӗвелтухӑҫ йенђи хӗрарӑмсен хушшинђи ӗҫсем)

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар — 1926

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Б. Советская, 6.

Чувашлит № 629. Напеч. 5000 экземп.

# УМӖНХИ САМАХ.

Ҫак пӗҫӗкҫӗ кӗнекене епӗ П. С. К. П-н Ҫаваш Опкомӗ ҫумӗнҫи Хӗрарӑм Пайӗ хушнипе ҫыртӑм. Хӗвелтухӑҫ йенҫи хӗрарӑмсен пурӑнӑҫне Каспарӑва ҫырна кӗнеке тӑрӑх кӑтартса, ҫыхвӑрсене „Комунисткӑ“ шурналран илсе ҫӗнетрӗм. Ҫавашпала Атӑл тӑрӑшшӗнҫи хӗрарӑмсем ҫинҫен, тӗрлӗ маттериал пухса, хам йӗркелерӗм.

Ытла васкавӑрла ҫыртарнипе кӗнеке кӗскерех тухрӗ, хӑш-пӗр тӗлсене ҫийелерехрен ҫеҫ пӑхса тӗрӗслемелле пулҫӗ. Майласа ҫырмасӑр ӑна кӑларасшӑн та марҫҫӗ. Анҫах ҫаваш хушшинҫе ҫакӑн пек кӗнекесем сахал пирки, тепӗр йенҫен Хӗрарӑм Пайӗ хистенипе, ҫаптарасах терӗм вара.

Тен ҫак кӗнекере тӗрлӗ ҫитменлӗхсем те пулӗҫ, лайӑхрах ҫутатса парайман вырӑнсем те палӑрӗҫ. Ҫавӑнпа, вулакансемпе хӗрарӑм хушшинҫе ӗҫлекенсем вӗсене кӑтартса парӗҫ, тесе ӗмӗтленетӗп.

Ҫыракан.

Шупашкар,
1926-мӗш ҫул.

# ХĔРАРĂМĂН ĔЛĔКХИ ПУРĂНĂÇĔ.

Пирĕн Совет республĕкĕсен Сойусĕнђе тĕрлĕ ђĕлхепе каладакан халăх (натси) çĕр ытла пурăнаť. Çак халăхсенђен хăшĕ-пĕрри хуçайствă тĕлĕшĕнђен те, куљттурă йенђен те малта тăраççĕ; нумайĕшĕ кайа йулнисем те пур; кĕскен каласан: кашни халăхăн пурăнăç йĕрки хăйне йеверлĕ, ыттисенђен уйрăмрах.

Епĕр пурăнакан çĕр-шывран хĕвелтухăç йенелли халăхсен пурăнăç йĕркийĕ Раççей варринђе пурăнакан халăхсеннинђен нумай урăхла. Касакстанпа Вăтам-Аçире пурăнакан халăхсен: уçпексен, туркменсен, таранђђасен, кашкарлаксен, кăркăссен, кара-кăркăссен, тункалсен, тата ťурксен пурăнăç йĕрки авалхи кивелнĕ йăласемпех çыхăнса пыраť-ха. Вăл йăласем „Коранпа", тата „Шариатпа" тĕпленнĕ. „Шариат" вăл мăссăљман тĕнĕ каланă тăрăх пурăнăçа тĕне пăхăнтаракан саккун

кĕнеки. „Шариат“ тăрăх: тĕне пăхăнмалла, аслисене итлемелле, хĕрарăмсен арçын ђури пулмалла.

Хĕвелтухăç йенђи халăхсен хĕрарăмĕсем ытла та нађар, хĕсĕк пурăннă: Вĕсем ĕмĕрĕ иртиђђенех арçын аллинђе ђуралăхра, йе ытти килти йапала вырăнĕнђе анђах пулнă. Малтан кађђа тухађђен ашшĕ тыткăнĕнђе пурăнаť, ашшĕ ăна хулăм укçилле (калăмла) сутаť; унтан вара упăшки хĕскĕђне куçаť, упăшки унăн мĕн пур пурăнăçне хăй аллине илет. Хĕвелтухăç йенђе хĕрарăмăн хĕр ĕмĕрĕ ытла та кĕске: сакăр йе вунпĕр çула çитиђђен анђах. Çак çулсене çитсенех ăна, виç-çĕмĕш йе тăваттăмĕш арăмлăха, кађђа тытса параççĕ (унти çынсем темиçе арăмпа пурăнаççĕ). Çав çулсене çитиђђен анђах мăссăљман хĕрĕ питне хупламасť; кађђа парсан вара унăн питне, упăшкинђен урăх, никам та кураймасť: вăтăр пиллĕке, йе хĕрĕхе çитиђђен лаша хӳринђен тĕртсе тунă хура ђартапа хупланса çӳресе çамрăк ĕмĕрне ирттерет.

Пуйаннисем те, ђухăнсем те хĕрарăма çын вырăнне хисеплемен. Пуйан килĕнђе хĕрарăм иртĕнмелли йапала йеверлĕ, ђухăн

патĕнђе тарçă вырăнĕнђе. Хĕрне кађђа тытса панă ђухне те, кађђи мĕн тĕрлĕ йурăхсăр пулсан та, амăшĕ хăй тăвассине тăваймаст.

Çак каланă сăмахсем хĕвелтухăçĕнђи хĕрарăм пусмăрлăхра ђĕнейми выљăх шутĕнђе пурăннине лайăх кăтартаççĕ.

Уçпексен, турксен, таранђђасен хушшинђе хĕрарăмсем карта хыçĕнђе уйрăм .тунă пÿртсенђе (иђкеринђе) пурăнаççĕ; арçынсем пурăнакан карташăн (килкартийĕн) тепĕр пайне вĕсене кÿртмеççĕ; ăçта та пулин кайнă ђух арăмĕсем хирĕç пулсан, айаккалла пăрăнса, вĕсене çул памалла.

Вăтам-Аçире, хулăм укçи тÿлеме вăй çитмен пирки, авланаймасăр йулнă çынсене ани çине кÿртме шыв та памаççĕ (унта ана çине, çумăр çуман пирки, шыв кÿртсе çĕр ĕçлеççĕ). Хулăм укçи пысăклăхпа вăл йенђе пуйансем çеç авланма пултараççĕ. Çавăнпа унта нумай арăмпа пурăнас йĕрке йупа уйăхĕнђи револютсиђђенех пулнă, халĕ те вăл тĕппипех пĕтсе çитеймен-ха.

Хĕвелтухăçри хĕрарăм килти мĕн пур йывăр ĕçе хăй туса тăрат: ђăтма çук шăрăх хĕртекен хĕвел питĕнђе, ђĕркуççи таран шыв

çинђе кунне 18 сехет ĕçлет; çав вăхăтрах çурăмĕ çинђе ађине çакса тăраҭ (кун пек ĕç пусма-тавар тăвакан мамăк ӳсекен çĕрте). Килĕ çинђе тӳсе çăнăхне те хăй тăваҭ, выљăхне те хăй пăхаҭ, ађи-пăђищĕн те пăшăрханаҭ, килте-çуртра та тирпейлет, упăшкине те ђышласа ађашлаҭ. Кил-çурт ĕçĕнђен пуçне сутлăх йапаласем тăвакан ĕçре те хĕрарăмах асапланаҭ: хаклă йыщши коверсем тĕртет, çумăр витерейми çăм атăсем йăвалаҭ, пуйансем ваљђи ђеђен илемлĕ пурçăн хатĕрлет.

Çак тери йывăр ĕçре те ђăтăмлă ĕç сынни пултăр тесе, упăшкине те урлă сăмах калама ан пултарайтăр тесе, хĕвелтухăçĕнђи хĕрарăма çырăва вĕрентмен: арçынпа тан хисепре çӳремелли ĕçе йаман ăна. Çавăнпа вăл ђĕнейми ђура пулса, çапла йупа уйăхĕнђи револђутсиђђенех пурăннă.

Мăхамет калана тăрăх: хĕрарăм ăс-пуç тĕлĕшĕнђен те, тĕн йенђен те арçынтан нумай кайра тăраҭ. Çакăн пек тĕрĕс мар ирсĕр сăмахсемпе „Шариат“ çынсен пуçне çавăрса хĕвелтухăç йенђи хĕрарăма темиçе çĕр çул хушши тыткăнпа пусмăрта усранă.

Пирĕнпе йунашар пурăнакан тутарсен, пушкăртсен, Капкасри арменсен, ђирккассен, оççетинсен хĕрарăмĕсен пурăнăçĕ те Вăтам-Аçири хĕрарăм пурăнăçĕнђен ытла лайăхах мар; нумай арăмпа пурăнасси, çамрăклах кађђа тытса парасси, ытти арçынсенђен питне хупласси, упăшкине пăхăнасси пурте пулнă. Анђах кайарахпа пурăнăç хĕсĕнсе килнипе упăшкисем йут халăх хушшине ĕçлеме кайа пуçласан, хĕрарăма пусмăрлас хăрушă йĕрке кăшт кăна çемçелнĕ; çапах та хĕрарăм ђуралăхран йăлтах тухайман.

## Атăл таврашĕнҗи вак халăх хĕрарăмĕсем.

Атăл таврашĕнҗе çармăссем, җăвашсем, мăкшăсем (ирçесем), вуттексем пурăнаççĕ. Çак халăхсем хушшинҗе те хĕрарăм пурăнăçĕ ытла савăнăçлах пулман. Ку халăхсем Мăхамет тĕнĕпе пурăнмаççĕ, пурăнăç йĕркине „Шариат“ тăрăх туса пымаççĕ; çаплах та хĕрарăм телейне мухтамалăх тĕлĕ çук вĕсен.

Җăваш хĕрарăмĕ мĕнле пурăннине астăвар-ха. 15—16 çултанах унăн питĕ хĕн, питĕ йывăр пурăнăçĕ пуçланать,—йывăрлăхĕ вилиҗҗенех пĕтмест. Тăван поет Çеçпĕл Мишши ун çинҗен ак çапла каласа хурланать:

Хура-шур анҗах курмашкăн
Кам çуралса ÿснĕ,
Çут тĕнҗере йывăр хурлăх
Кам ытларах тÿснĕ?

Çут тĕнҗере кам телейĕ
Çĕре ÿксе йулнă,
Авалтанпа кам кунçулĕ
Тарçăри пек пулнă?

Камăн вăл: кунçулĕ йывăр,
Хурлăхлă кунçулĕ?
— Ђăваш арăмĕн пулмасăр,
Тата камăн пулĕ...
(„Ђăваш арăмне“).

Ђăнах та, пĕђĕкçĕллех вăл ађа пăхса, кил-çурт хуралласа, хур-кăвакалпа ђăхă-ђĕпĕ пăхса хăшкăлаť. Савăнса çыру (хут) вĕренмелли вăхăђĕ çав ĕçсемпех иртсе кайаť. Çитĕнсе хĕр пула пуçласан пир тĕртме, тĕрĕ тума, ђĕнтĕр çыхма тытăнаť. Ытла та йывăр ђăкăл-тăш ĕçлĕ сурпансемпе масмак-сарă тавраш тĕрлесе, шурă пирне пĕрђĕн суйласа, тинкер-се пăхса ларнипе çамрăклах хăйĕн куç вăйне пĕтерет. Кађђа кайма тытăнсан хĕрипраçа пи-тĕ нумай йапала кирлĕ вĕт. Кађђа кайайман хĕр—хĕр те пулмасť вара: ăна çын вырăнне те хисеплемеççĕ.

Анђах пирĕн ђăвашпа ытти Атăл тавра-шĕнђи вак халăх хĕрĕсем ӳссе çитĕнсен те, ĕлĕкхи саманара, хăй йуратнă кађђа пинтен пĕри çеç кайнă; ыттисене ашшĕ-амăшĕ 25—35—50—100 тенке хулăм укçилле ирĕксĕр тытса сутнă. Хĕрĕ хирĕç тăрсан та, ашшĕ хăй тăвас тенине тунă. Кађђа илекkенни вата-и,

ухсах-ђăлах-и—сарăпламан: хĕр ашшĕшĕн унăн пуйанлăхĕ çеç пултăр: хĕрĕн кăмăлне кайат-и, каймаст-и—унпа хисеплешмен. Вăл çавăнтах тата хĕр-ипраçа вăрлас йăла пулнă. Кађђа илес тейекен лаша кӳлсе пырат те, ирĕксĕр çуна çине вырттарса илсе кайат; ирĕксĕр туй туса хĕрĕн йатне йарат, кайран,—туй иртсен пĕр-ик уйăхран тин, ашшĕ-амăшĕпе кайса килĕшет. Çапла мăшкăл тунă хĕрĕн йе çакăнса вилмелле, йе ĕмĕрне куççул тăкса ирттермелле пулнă; кайалла килне тавăрăнсан, ашшĕ ăна ирĕксĕр вăрлакан патне леçнĕ; леçмесен те, ун çинђен йала (ырă мар) йат сарăлнă. Çакăн пек ирсĕр йапалана ĕлĕкхи патша саккунĕ ђарман, йал хавхи те ăна пулăшса тăнă. Ђиркĕве венђет тума кайсан, пилсĕр, ĕмĕтсĕр пуп хĕрарăма ĕмĕр упăшкине пăхăнса пурăнма хушнă. Çапла вара сутма та йурăхлă, вăрлама та йурăхлă хĕрарăм ĕлĕкхи саманара выђăх хисепне çӳренĕ.

Хĕрарăмăн хуйхăллă пурăнăçĕ, çак каланă сăмахсемпе анђах пĕтмест-ха. Унăн пурăнăçĕ, кађђа кайса арăм пулсан тата ытларах хĕсĕнет. Çĕр тĕрлĕ килти ђăкăлтăш ĕç кам çинђе тăрат?—Хĕрарăм çинђе. Вунă-вуник ађа-

пăђана кам çуратса пăхса ӳстерет?—Хĕрарăм. Ађисем ӳссе çитĕниђĕен вĕсене çынна кăларасшăн кам куççул, йухтарат?—Хĕрарăм, йăваш ырă кăмăллă вар, хăрарăм-анне.

Хĕрарăм ырă, çутă, савăнăçлă пурăнăçпа пурăнаймаст,—пĕр йапала пĕлмесĕр ĕмĕрне ирттерсе йарат. Çулахи, кĕрхи вăхăтра арçынсемпе тан хирте, йĕтем çинђе ĕçлет; хĕлле выђăхсем пăхат, ђăхă-ђĕпĕ тăрантарат, йашкине пĕçерет, хура-мара тасатат, пирнеавăрне туса кил-йышне тумлантарат, арçынпа пĕрле вутă турттарма вăрмана та çӳрет: çитмен пурăнăç пирки пуйан патне куннĕн ĕçлеме тара кĕрĕшет, пĕр-ик ђӳлмек турăхшăн хутăр хутăрса парат. Хĕрарăм çинђе тăракан темиçе çĕр тĕрлĕ ĕçсене шутласа та пĕтĕрес çук. Вăл вĕсене никама ӳпкелемесĕр тăват, никампа хисеплешмесĕр хăйĕн кĕске ĕмĕрне кăштăртатса ирттерет.

Çапах та, кил-çуртпа çемйине тирпейлесе тăрат пулсан та, хĕрарăма арçынтан кайа хунă. Упăшки ăна пăхăнтарса, пуççаптарса пурăннă; усал çын аллине лексен,—ăна хĕнесе çĕмĕрсе пĕтерне. Вăл, мĕскĕн, апатне те

йёркелĕ çийеймен, çи-пуçне те лайăх тумланайман; анђах çапах та: „ей, çаплах ĕмĕр иртĕ-ха“ тесе кăмăлне пусарнă.

Çак ђуралăха патша саккунĕ хытă тытса тăнă. Хĕрарăма, арçын-упăшка ирĕкĕнђен ан тухайтăр тесе, çĕр те паман; хăй аллине паспăрт памасăр, упăшки çумне çырса, ун çулне пӳлнĕ. Çитменнине тата тĕн ултавĕпе „венђет туса“ упăшки çумне ĕмĕрлĕхе çыхса хунă.

Хĕвелтухăçĕпе Атăл тăрăшшĕнђи хĕрарăмсен пурăнăçĕ ĕлĕкхи ирсĕр, ылханлă, пусмăрлă патша саманинђе çавăн пек хăрушă, тискер, сывласа сывлăш тухми хĕсĕк, куç курайми тĕттĕм пулнă.

## Советлă Хĕвелтухăçĕнђи хĕрарăм.

Епĕр пурăнакан самана акăш-макăш пысăк револютсиллĕ ĕçсемпе çыхăнса тăрат. Вăл, ђуралăхпа пусмăра хирĕç çĕнĕ опшђĕствă хурмисем тумашкăн, вĕçĕ-хĕррисĕр ирĕк çул уçса парат.

Маркс вĕрентнĕ мелсене ăнланса çитнĕ пролеттариатăн витĕр куçĕ—П. С. К. П. (Пĕтĕм Сойусри Комуннис Парттийĕ) пур пулса пыракан йапала çине те клас тĕлĕшĕнђен пăхат; вăл револютси тăвăлĕ мĕнле йĕркесемпе ÿссе вăйлăланса пынине те лайăх палăртат, çĕнĕ йĕрке патне илсе пыракан çулпа ăна çирĕплетекен мелсене те пĕр йăнăшмасăрах кăтартса парат. Хăйĕн карапне шавлакан револютси хумĕсем ăшнелле йарса, вăл револютси вăйĕ ăçтан килнине лайăх сăнаса пĕлет. Револютси вăйхăваđĕ пусмăрта асапланса пурăнакан халăхсенђе, çавăнпа вăл вĕсене çийеле çĕклесе кăларма тăрăшат.

Йупа уйăхĕ револ̌утсийĕ тĕнђере пулса иртнĕ пур револ̌утсисенђен те аслă. Вăл темиçе мĕлйун ĕçлекенсемпе хресђенсене политтĕк йенђен пăђăхса ларнă çĕртен тапратрĕ. Вăл вăйлисен айĕнђе тарăхса пурăнакан вак халăхсене хăтарђĕ. Вăлах тата ђуралăхпа мăшкăла йулнă хĕрарăм çарне те хумхатса йађĕ. Икĕ пусмăр айĕнђе асапланакан Хĕвелтухăç сасартăках револ̌утсин ђи малти çарĕ пулса тăђĕ. Пуринђен малтан патша вăхăтĕнђе пусмăрланнисене комунисла йухăма хутшăнтарас тесе, вăл хăйĕн тĕп вăйĕсене револ̌утси фронђĕн йăвашрах вырăнĕсем тăрăх пухса пĕрлештерђĕ; ку тĕлĕшпе вăл пол̌шевиксен йĕрки май пыраť.

Патша йĕркин хăрушă политтĕкĕпе унăн сийенлĕ тăкăнђăкĕсене ђасрах пĕтерес тесе, совет влаçĕ вак халăхсене харпăр хăй ирĕкĕпе пурăнмашкăн тивĕç, ирĕк пађĕ. Вăл тĕлĕшпе вĕсем Р. Ф. С. С. Респуплĕкĕнђен уйрăма тухса пĕтĕмпех уйрăмăн пурăнма та пултараççĕ. Совет Респуплĕкĕн талккăшĕнђех йулма килĕшнисене те темĕн сарлакăш автономи параççĕ. Çакăнпа пĕрлех тата совет влаçĕ пĕтĕм вăйпа Хĕвелтухăç халăхĕсене

кайа йулнӑ хуҫайствӑ пусмӑрӗнҕен хӑтармашкӑн, хуҫайства та сарлака—ӳсӗмлӗ ҫул ҫине кӑларса ҫӗклентерсе йамашкӑн тӑрӑшат̆. Унтан, кивӗ пурӑнӑҫ йӗркисене пӗтерсе, халӑхӑн тӑн-пуҫне куљттурӑпа политтӗк тӗлӗшӗнҕен те ҫутатма вӑй хурат̆.

Хӗвелтухӑҫӗнҕи хуҫайствӑ йӗркине хӑпартса ҫирӗплетес пысӑк ӗҫе тытӑнсан, комуниссен парттийӗ ҕи малтан хӑй умне ытла хӗсӗнсе, ытла пусмӑрланса пурӑннӑ халӑх сийӗсене ҫӗклесе тӑратас ӗҫе тытӑнҕӗ. Паллах ӗнтӗ, вӑл ҕӑн малтан Хӗвелтухӑҫ хӗрарӑмне асӑрхамалла пулҕӗ. Хӗвелтухӑҫӗнҕи ӗҫ хӗрарӑмӗ—пур пусмӑрлисенҕен те пусмӑрлӑрах, ҕурараан та ҕура. Унӑн хурлӑхлӑ мӗлки етем асапӗн кӗнеки ҫине ӳкнӗ пур мӗскӗн ҕурасене те витсе хупласа тӑрат̆. Пуҫ тӳпинҕен пуҫласа ура тупанне ҫитиҕҕен тумтирпе ҕӑптаннӑскер, вӑл мӗн пӗҕӗкҫӗренпех хупӑнса питӗрӗнсе пурӑнат̆. Ӑна, йапала пек, сутаҫҫӗ те, илеҫҫӗ те. Вӑл кил хушшинҕи вак-тӗвек ӗҫсене суйланӑ ҫӗрте хутшӑнма та, хӑй тӗллӗн пӗр сӑмах калама та пултараймаст̆: кирек мӗнре те ашшӗпе пиҕҕӗшне, унтан упӑшкине пӑхӑнса тӑрат̆. Кун пек ҕуралӑхран хӑҫан та пулин

хăтăласса вăл шанмасť. Çапла Хĕвелтухăç хĕрарăмĕ çураласссах ылхан кĕлемипе çуралаť, вилсен те ăна хăйпе пĕрлех çĕре илсе кĕрет. Çак кĕлемене пĕтересси, хĕрарăм хулпуççи çинђен виçĕ хутлă пусмăра—хуçайствă, политтĕк, кил-йыш пусмăрĕсене — сиресси, йулашкинђен ăна çĕнĕ пурăнăçа çирĕплетес ĕçе хутшăнтарасси,—çакă сатађђăсем комуниссен партти умĕнђе тăраççĕ.

Малтанхи утăм, малтанхи сăнав ку йенĕпе пит те ăнăçлă пулђĕ. 9 пин хĕрарăм ытла хăйсен тĕттĕм, хĕсĕк пӳлĕмĕсенђен тухса,— клупсене, шкулсене, маçтерскуйсене тулђĕç; тĕрлĕ ушкăнсемпе ерттелсене кĕрсе пĕрлешрĕç. 4.000 хĕрарăм ытла патшалăха çирĕплетес ĕçре те тăрăшма пултарни курăнђĕ; вĕсен хушшинђе совет ђленĕсем, сутйесем, тата халăх саççетаттĕлĕсем те пур.

Хĕвелтухăсĕнђи хĕрарăма ђуралăхран хăтарас ĕçĕн малтанхи ӳсĕмне тĕрĕсрех палăртмашкăн советлă Хĕвелтухăçĕн уйрăм кĕтессисене лайăхрах асăрхаса пăхар-ха.

Çĕр-шыв тĕлĕшĕнђен советлă Хĕвелтухăçĕн талккăшĕ темиçе мĕлйун çухрăма сарăлса выртаť. Кунта, Капкас хыçĕнђи — Круçи,

Армени, Аçерпайтшан респуплĕкĕсемпе çурçĕрти Капкас халăхĕсен пĕрлешĕвĕсемсĕр пуçне, Турккестан кĕрет. Турккестан вăл хаљ темиçе пайа уйăрăлса тăрат: Уçпекстан, Туркменистан, Кара-Киркиçи, Кара-Калппакки, тата Татшиккистан; вĕсем пур те 2-шер мĕлйун тăваткăл çухрăма йахăн çĕр йышăнса тăраççĕ. Кунсăр пуçне тата Кăркăс, Пушкăрт, Тутар респуплĕкĕ, калмăксен автономлă оплăçĕ, утан Çĕпĕрĕн Хĕвĕлтухăç ђиккинђи пуретмонколпа йаккут респуплĕкĕсем кĕреççĕ. Çаксене пурне те пĕрле илсе шутласассăн, хăйсен пысăккăшĕпе вĕсем Керманипе Франтсипе Итталирен те иртсе кайаççĕ.

Хĕвелтухăçĕнђи вак халăхсен респуплĕкĕсемпе оплăçĕсене епĕр хуçайствă тĕлĕшĕнђен йĕркелетпĕр. Çавăнпа та ђи малта тăракан ушкăна вăйлă промышлĕннăçлĕ, тупăшлă йалхуçайствиллĕ, йе сӳс-кантăр, мамăк-пурçăн тавраш тăвакан респуплĕксене кӳртетпĕр. Ку ушкăнра Аçерпайтшан, Круçи, тата Турккестан шутланаççĕ.

## Аçерпайтшан.

Аçерпайтшан ђиккисенђе темĕн пысăккăш нехтă кăларакан вырăнсем (çăлсем) пур. Нехтă промышлĕннăçĕнђе унта 30.000 çын ĕçлет, вăл—пĕтĕм Аçерпайтшанри кĕрĕшсе ĕçлекенсен виççĕмĕш пайĕ пулаť.

Хĕрарăмсем Аçерпайтшан промышлĕннăçĕнђе 1924-мĕш çулта 14.800-ĕн ĕçленĕ, ку пĕтĕм АССР пролеттариађĕн 13 прођђăнне йахăн пулаť.

Вырăнти пурăнăç йĕркисене кура—унта хĕрарăм клупĕсем тунă. Хаљ çавăн пек клупсем пĕр Пакку хулинђе çеç 8; вĕсенђен пĕри тĕп клуп, çиђђĕшĕ райунсенђе. Паккури Аљи Пайрамăв йађĕпе уçнă тĕп клуп—Хĕвелтухăç хĕрарăмĕсем хушшинђи пĕтĕм ĕçĕн ђи тĕреклĕ тĕнĕлĕ. Клуп, 600 ђлен ытла пухса, темиçе тĕрлĕ ĕçе талккăн сарса йама пултарнă. Клупра тăватă çекси тунă: çутăлăхăн, илемлĕхĕн, професçипе технĕккăн, тата сывлăхăн çексисем. Малтан кăтăртнă çекси тăрăшнипе

кĕҫĕн шкулсем, тата пысăкрах шкулсем те уҫнă. Паккури тĕп клуп ҫумĕнђе тăвата крушок пур: трамă, хор, мусăк, тата ташă (палет) крушокĕсем. Екkономĕк (хуҫалăх—пурлăх) тĕлĕшĕнђен хĕрарăмсене ҫирĕплетсе, хăйсем тĕллĕн пурăнма пултарђђăр тесе хатĕрлемешкĕн, клупра 4 ҫул вĕренмелли профеҫҫипе технĕк шкулĕ ĕҫлет. Вăл шкул ҫумĕнђе темиҫе пай: тумтир касса ҫĕлемелли, кĕнеке тавраш хытăҫиййĕ хатĕрлемелли, атă ҫĕлемелли, тĕртмелли, тата тĕрлĕ илемлĕхе (иҫкусствăна) вĕренмелли пайсем пур. Ҫав шкул тăрăшнипех ҫĕлекен, тата тĕртекен ерттелсем тунă; вĕсем шкулпа тађă ҫыхăнса тăраççĕ. Алђи Пайрамăв клупĕнђи сызлăх ҫексин ĕҫĕ ҫапла: вăл тăрăшнипе сырăшсем (йаҫлĕсем) уҫнă, вĕсенђе 1923-мĕш ҫулта 8.244 ађа пурăнса тухнă; тата ађа ҫуратас йĕркене вĕрентмелли курссем уҫнă, унта 40 хĕрарăм вĕреннĕ.

Шкулсенђе, крушоксенђе, тата маҫтерскуйсенђе тăрăшса ĕҫленисĕр пуҫне, клупăн халăх хушшинђи ĕҫĕ те ăнса сарăлса пырат. 1923-мĕш ҫулта вăл 10 пĕрлешӳлĕ пуху тунă, 23 лекси вуланă, 6 револђутси праҫникĕ ирттернĕ, унтан 2 хут—вĕренес сăлтавпа—тĕрлĕ вырăнсене курса ҫӳреме илсе кайнă.

Çак темиçе тĕрлĕ пысăк ĕçе клуп правленийĕ йиертсе пыраť; унта 11 ťурк хĕрарăмĕ, тата 2 вырăс тăраççĕ. Правлени хăйĕн ĕçне АСС Респуплĕкĕнђи ĕç хĕрарăмĕсен пайĕпе килĕшсе туса пыраť; хĕрарăм пайĕ ăна йаланах пулăшса, мĕнле ĕçлемеллине кăтартса параť.

Тĕпри Аљи Пайрамăв клупĕ пекех—райунсенђи, ытти хуласенђи, тата уйессенђи клупсем те хăватлă ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ăшне мĕн пур пурăнма пултаракан хĕрарăмсене пуçтарса тултараççĕ, йађђейккăсем уçса, сарăлнă çемĕн ӳссе йышлăланса пыраççĕ.

Хаљ Аçерпайтшан райунĕсемпе уйесĕсенђе пурĕ 211 клуп ĕçлет; вĕсен çумĕнђе—30 крушок, 26 шкул, 8 ерттел, тата 2 маçтерскуй орканисатсиленĕ. Çак орканисатсисенђе 200 хĕрарăм ытла ĕçлеççĕ. Пур хĕрарăм клупĕсен ђленĕсем Аçерпайтшанра 2.000 ытла шутланаççĕ.

Клуп вăйлă ĕçленине—хĕрарăмсем халăх хушшинђи ĕçе хутшăнма пуçлани те лайăх кăтартса параť. 1924-мĕш çулта Аçерпайтшанра 13 пин хĕрарăм ытла профсойуссене кĕрсе пĕрлешнĕ, ку пур профсойус ђленĕсен 12 прођђăнĕ пулаť; çаплах тата професçи

тытăмĕсене суйланнисен прођђăнĕ те ђылай пысăк.

Анђах хĕрарăмăн халăх хушшинђи ĕçĕ професçи орканисатсийĕсемпе кăна ђарăнмасť, пĕтĕм Аçерпайтшан тăрăх советсенђе те ĕç-лекенпе хресђен хĕрарăмĕсем 449 çын ĕçлеç-çĕ. Кунсăр пуçне тата 40 хĕрарăм халăх саç-çетаттĕлĕ пулнисем пур; вĕсенђен 21-ĕшĕ мăссăљман хĕрарăмĕсем, ку пит те вырăнлă. Апла туни—вырăнти сутсем кил-йыш хуш-шинђе тухакан тĕрлĕ пурăнăç ыйтăвĕсене татса панă ђух—тата питрех кирлĕ.

Иртнĕ çул халăх суђĕсем икĕ пин çурă ĕç пăхса тухнă, вĕсем пурте килти-çемйери пурăнăç пирки тапраннăскерсем пулнă. Çул-талăк хушшинђе. тивĕçе (правăна) хўтлес шутпа хута кĕрсе 1.388 хĕрарăм тухса калаçнă.

Хĕрарăмсене парттипе халăх хушшинђи ĕçе хутшăнтарасси телекат пухăвĕсем урлă пулса пыраť. Хулара телекаткăсене хапрăк-савăтсемпе тĕрлĕ орканисатсисем суйласа ху-раççĕ, йалта—советсем. 1923-мĕш çулта 2.048 телекаткă суйланнă; вĕсенђен 639-шĕ Паккура, 516-шĕ ытти хуласенђе, тата 893-ĕшĕ йал-сенђе ĕçлеççĕ.

Телекат пухăвĕсемсĕр пуçне Аçерпайтшанри хĕрарăм пайĕсем 1923-мĕш çулта, парттире тăман хĕрарăмсене пуçтарса 1.600 пуху (вĕсенђен 805-ĕш уйессенђе пулнă), тата 20 конферентси ирттернĕ; унта темиçе пин хĕрарăм пынă.

Халăх хушшинђи тепĕр тĕрлĕ пысăк ĕç вăл—курссем, вĕсенђе 2.860 хĕрарăм ытла вĕреннĕ.

Вырăнти тĕп халăхран тухнă хĕрарăмран ĕçлекенсем çителĕклĕ мар пирки,—Аçерпайтшанра йури хĕрарăм курсĕсем уçнă.

Çав, халăх хушшинђе ĕçлеме вĕрентсе кăларакан курссенђе — малашне хуласемпе йалсем тăрăх комунисăм тăвас ĕçре çӳремелли хĕрарăмсем хатĕрленеççĕ. Хуласемпе йалсенђе иртекен телекат пухăвĕсен, конферентсисен, тата тĕрлĕ кампанисен пысăк ĕçĕ—çеремленнĕ çĕре алтса кăпăшлантарать; ăна комунисăм вăрлăхне шăтарса ӳстерме пултаракан тăвать.

Пуш уйăхăн 8-мĕш кунĕн кампанийĕ тата питрех те вăйлă, сарлакан иртет. 1924-мĕш çул çав праçнике ирттермешкĕн Аçерпайтшанăн 51 пунктĕнђе 17 пин çын ытла пухăннă; вĕсенђен 2.508-ăшĕ тӳрк хĕрарăмĕсем

пулнӑ, ӗҫ хӗрарӑмӗсем 200-тен иртнӗ. Ҫав ҫулхи хӗрарӑм кунӗ 1923-мӗш ҫултинђен 6.250 ҫын ытларах пухнӑ. Паккура вӑл праҫник пит хӑватлӑ кӗрлесе иртнӗ; унта кӗҫӗн орканисатсисем, йађђейккӑсем, тата клупсем те хытӑ тӑрӑшса ӗҫленӗ.

Аҫерпайтшанӑн уйесӗсем те, пурте тенӗ пекех, ҫав праҫнике тулли кӑмӑлпа хаваслӑ уйавланӑ.

Мӑссӑљман хӗрарӑмӗсем, хӗрлӗ йалав ҫӗклесе, темӗн пысӑккӑш ушкӑнсемпе пыра-пыра, хӑйсен праҫникне пуҫтарӑннӑ; унта хӗрсем те, ват карђӑксем те, ҫывӑхрисем те, инҫетри тӗттӗм кӗтессенђен килнисем те пулнӑ.

Ҫакӑнта, Аҫерпайтшан хӗрарӑмӗн пурӑнӑҫӗ ҫинђен ҫырма ђарӑнса, епӗр Круҫи ҫине куҫатпӑр; вӑл хӑйӗн пурӑнӑҫ йӗркисемпе Аҫерпайтшанран ђылай урӑхларах.

## Круçи.

Круçи вăл, пĕтĕмĕшпех илсессĕн,—хресҫен çĕршывĕ; унти халăх çĕр ĕçĕпе пурăнни пур йенҫен те лайăх палăрать. Анҫах çапах та унта— çĕр кăмрăкĕ кăларакан шахтăсемпе копписем, тимĕр-тăмăр рутникĕсем, кĕленҫе (кантăк) савăҫĕсем, тата вăрман касса хатĕрлекен савăтсем те пур. Респуплĕкри пĕрлешсе ҫăмăртаннă ĕçлекенсен шуҫĕ çĕр пине çитет, вĕсенҫен 13,6% хĕрарăмсем.

Клуп Круçире пурĕ те иккех: пĕри Тифлисре, тепри Паттумра. Тифлисри клупăн ĕçĕ йулашки вăхăтра ҫĕрĕлсе вăйлăлана пуçлани палăрҫĕ. Унăн ҫленĕсем виççĕртен те иртнĕ. Вăл Тифлисри клуп хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе те хытă, тата ун çумĕнҫе трамă крупокĕ те ĕçлет; çавăнтах тумтир касса çĕлемелли маçтерскуй вырăнаçнă. Клуп çумĕнҫех сут-йĕр тĕлĕшĕпе вĕрентекен çекси ĕçлет, унăн ĕçĕ мăссăљман хĕрарăмĕсем хушшинҫе питĕ хисеплĕ. Çак икĕ клупсăр пуçне Атшарипе

Хулора, тата Капулетпа Кетӑ йатлӑ хуласенђе мӑссӑљман хӗрарӑм кӗтессисем тӑваççӗ.

Телекат пухӑвӗсем те Круçире, клупсем пекех, Аçерпайтшанринђен сахалтарах пулаççӗ. 1923-мӗш çулта Круçире телекаткӑсен шуђӗ 1500 çынна çывӑхарнӑ, çулталӑк хушшинђе 325 пуху туса ирттернӗ. Çав çул тухнӑ çӗре пулнӑ суйлавсем хыççӑн вара 2.200 телекатка çитнӗ.

Телекаткӑсене йерипен куллен кунхи ӗçе хутшӑнтарса пыраççӗ. Хаљхи пуху уйӑрнӑ 40 телекаткӑ Тифлис совеђӗн çексийӗсенђе ӗçлеççӗ.

Телекаткӑсем хушшинђи хут пӗлменлӗхе пӗтерессе те хытӑ асӑрханӑ курӑнаҭ. Иртнӗ 1.300 телекаткӑран 899 хӗрарӑм çырӑва вӗреннӗ.

1923-мӗш çулта Круçире 2.000 пӗрлешӳлӗ хӗрарӑм пухӑвӗ, тата 23 конференци туса ирттернӗ; вӗсене, çӳреме инçе пулнӑ пулин те, нумай хӗрарӑм кӑмӑл туса пит хавасланса пынӑ.

Пуш уйӑхӑн 8-мӗш кунӗ Круçире, Аçерпайтшанри пекех, питӗ хытӑ кӗрлесе иртнӗ.

Круçийӗн тӗп хулинђе, Тифлисре, пӗтӗм тӗнђери хӗрарӑмсен кунне уйавламашкӑн çиђӗ

пин ĕç хĕрарăмĕ, тата темиçе пин ĕçлекенсем, хĕрлĕ салтаксем, çамрăксем пуçтарăннă.

Уйессем тăрăх та, пур çĕрте те, çав праç- ник халиђђен пулман хаваслăхпа иртнĕ. Порђђалински уйесре вăл пур пысăк йалсене те—36 йал çаварса илнĕ, вĕсенђен нумайĕшĕ мăссăљман йалĕсем. Икĕ райунта вăл праçнике Комсомол тăрăшнипе, унăн вăйĕпе уйавласа ирттернĕ.

Атшарипе Апхаçи респуплĕкĕсен уйрăм уйесĕсенђе те çав праçнике халăх çаплах ђаплă ирттернĕ.

Круçире тĕрлĕ ерттĕлсем тума тăрăшнă, вĕсем усă кўрессии курăннă; анђах вăл тĕлĕшпе ку таранђђенех ĕç çĕкленсе кайайман-ха. Хаљ çавăн пек ерттелсенђе пурĕ 150 хĕрарăм тăрат. Профеççилĕ шкулсене хĕрарăмсем ђылайăн кĕреççĕ. Халĕ Круçире çавăн пек шкулсенђе вĕренекен хĕрарăмсем 1.100 çынна çитеççĕ.

Круçи хĕрарăмĕн ăс-пуçне куљттурăпа по- литтĕк тĕлĕшĕнђен те, хуçайствăпа кил-тав- рашри пурăнăç йенђен те çутатма тăрăшаççĕ. Çав темиçе тĕрлĕ ĕç ăнса пынине профеççипе совет тытăмĕсенђи, тата копператсипе партти

ĕçĕнҫи хĕрарăмсен шуҫĕ ҫарăнмасăр ӳссе йышлăланни те лайăх кăтартаť.

1924-мĕш çулта, кăрлаҫăн 1-мĕшĕнҫе тĕрĕсленĕ тăрăх, Круçире клуп правленисемпе вырăнти комиттетсенҫе 128 ĕç хĕрарăмĕ хисепленет; ку—çавăнта ĕçлекенсен 12,5 проҫҫăнĕ пулаť. Çак ҫыхвăр профсойуссенҫи хĕрарăмсен проҫҫăнĕпе кăшт кăна танлашаймасť (вĕсенҫе 13,6%). Çавăнпа та вăл, хĕрарăмсем професçи ĕçĕнҫе хăйсен хастарлăхĕпе арçын йулташĕсенҫен кайа йулманнине, вĕсемпе тан пыма пултарнине кăтартаť. Круçи совеҫĕсенҫе 1923-мĕш çулта 213 хĕрарăм пулнă, 1924-мĕш çулхи суйлавсем хыççăн хĕрарăм ҫленсем 664 çынна çитнĕ; ку ҫыхвăр советсенҫи хĕрарăмсем пĕр çулталăкра 3 хут ытла ӳснине кăтартаť. Кунсăр пуçне Круçире тăватă хĕрарăм сутйе, 47—халăх саççетаттĕлĕ, тата тăваттăн—хута кĕрекенсен коллеки ҫленĕсем. Круçири копперативв ҫленĕсенҫе тăракан хĕрарăмсен шуҫĕ 2.875 çынна çитет; ĕçе йертсе пыракан тĕрлĕ хĕрарăм орканисаттăрсем Круçире халҫ пурĕ 300 çын.

## Туркъестан.

Туркестана та, Круçи пекех, йалхуçайстви ĕçĕпе пурăнакан çĕршыв темелле. Унти халăх 80 проъъăн йалсенъе пурăнаť, хула çыннисем 20% çеç.

Халăхăн тĕп ĕçĕ—мамăк пуçтарасси, тĕрлĕ çимĕç саъĕсем лартса тăвасси, тата иçĕм çырли ĕръетесси.

Мамăк ĕçĕнъен пуçне унта—нехтă, пулă, тăвар, тир хатĕрлеççĕ, тата тусем çинъен тĕрлĕ хаклă йапала кăларакан промышлĕннăç вăйлă ÿссе кайнă. Туркестанра промысла претприйаттийĕ 14.708, унта ĕçлекенсен шуъĕ пурĕ 70 пине çитнĕ.

Вырăнти тĕп халăхăн хĕрарăмĕсем происвотствăра питĕ сахалăн ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем нумайăн ĕçлекен пысăк претприйаттисем—кренаш ĕçĕпе маркеланти пурçăн тăвакан хапрăк; вĕсенъе пĕтĕм хапрăкăн пуçлăхĕсем, хапрăк-савăт комиттеъĕсенъе ĕçлекенсем—

пурте хĕрарăм. Туркkестанри пĕрлешсе ĕçлекен хĕрарăмсем пурĕ 14 пине çитеççĕ; ку— Туркkестан профсойус ђленĕсен 20 прођђăнĕ ытла пулаť. Вырăнти ĕç хĕрарăмĕсем хушшинђе тĕрлĕ çĕрťен пынă хĕрарăмсем нумайрах. Туркkестан пурăнăçĕн хăйне майлă условисем пур, çавăнпа унта „Кошђи" йатлă (професçипе копператси пĕрлешĕвĕ йевĕрлĕ) сойус оркарисатсиленĕ. Çав сойус йалти ђухăнсене, сахал çĕрлĕ йе пĕртте çĕрсĕр пурăнакан хресђенсене („техкансене"), тата тарçăсене пĕрлештерсе тăраť. „Кошђи" сойусра 113.500 çын шутланаť. Çу уйăхĕн 1-мĕш кунне иртернĕ ђухне унта хĕрарăмсем 900 йахăн пулнă, пĕри сойусăн Тĕп Комиттетне лекнĕ.

Туркkестан халăхĕсен хĕрарăмĕ, совет саккунĕ тăрăх ирĕк, арçынсемпе пĕр тивĕçлĕскер, - çемйере пайан кунђђенех ђура пулса пурăнаť. Пĕр йенђен вăл Туркkестан Тĕпĕçтăвкомĕн ђленĕ те пулма пултараť; тепĕр йенђен—упăшки ăна халиђђенех, кирек хăш минутра та, вĕлериђђен хĕнесе минкетме пултараť; урăх арçынпа йавăçĕ тесе пĕррех иккĕленсе кўлешсен те килĕнђен хăваласа кăлараť, йе тата совет саççетанине каймашкăн ђараť.

Ҫак авалхи ӗмӗрсенђен йулнӑ хӗрарӑмӑн ђуралӑхне партти асӑрхамасӑр хӑварма пултараймасҭ, ӑна тӗп тумашкӑн вӑл хӗрарӑм хушшинђи ӗҫе темӗнрен мала хураҭ.

Малтанхи ӑнӑҫлӑ ӗҫ—хулӑм укҫине пӗтермелле тунӑ текрете кӑларни, тата ытти саккунсем те; вӗсене Турккестан Тӗпӗҫтӑвкомӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ иртсенех ӗҫе кӱртнӗ.

1924-мӗш ҫулта пуш уйӑхӑн 8-мӗш кунӗнђе хӗрарӑма выљӑх вырӑнне хурса хулӑм укҫи тӱлесе илес йӗркене пӗтерессн ҫинђен кӑларнӑ текрета Турккестан Тӗпӗҫтӑвкомӗ тепӗр хут пӑхса тухса йышӑннӑ, ӑна вара Пӗтӗм Раҫҫейри Тӗп Ӗҫтӑвакан Комиттет та ҫирӗплетнӗ. Кунсӑр пуҫне тата хӗрсем 16 ҫула ҫитсен тин кађђа каймалли ҫинђен текрет кӑларнӑ; ӗлӗк вӗсене, „Шариат“ тӑрӑх, 9 ҫултах тытса сутса мӑшӑрлантарнӑ. Ҫак текрета пурӑнӑҫа кӱртмелли йӗркесене кӑтартса, хӗрарӑм пайӗ, Халӑхӑн Йуститси Комиссариађӗпе Шалти Ӗҫсен Комиссариађӗ урлӑ, пур вырӑна та ҫыру (тсирккуљар) йанӑ.

Сут тытӑмӗсенђе ӗҫлеттермешкӗн, вырӑнти тӗп халӑхӑн хӗрарӑмӗсене практтика кӱртеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне тата хӗрарӑм пайӗ—сутсенђе

хута кӗрсе калаҫакансене, тата халӑх саҫҫе-таттӗлӗсене те хӗрарӑмсенҗен уйӑрат. Ҫаплах тата хӗрарӑм пайӗ кварттӑл комиҫҫийӗсене те хӑй претставиттӗлӗсене кӳртет; унта вӗсем, ҫитӗнсе ҫитмен пӗҗӗк хӗраҗасене ирӗксӗр каҗҗа тытса партармасӑр ~~хытӑ~~ тӑраҫҫӗ, ҫав айӑпсӑр мӗскӗнсен хутне кӗреҫҫӗ.

Ҫутӑлӑх ӗҫне те хӗрарӑм пайӗсем асӑрхамасӑр хӑвармаҫҫӗ, хытӑ астӑваҫҫӗ. Ҫак ӗҫре җи пысӑк, җи кирлисенҗен хӗрарӑм клупӗсем. Туркҡестанра пилӗк клуп, вӗсенҗен җи палли —Крупски йулташ йаҗӗпе уҫнӑ Ташкентри клуп. Вӑл клупра тухтӑрсен уйрӑмӗ, шкул, ҫӗлекен ерттел, пиплиоттек, тата тӗрлӗ пухусемпе, ҫпектаккӑљсене ирттермелли пӳлӗмсем пур. Клуп ҫутӑлӑх ӗҫне тӗплӗ, сарлакан туса пырат; ун ҫумӗнҗе тӗрлӗ крушоксем—трамӑ, крушокӗ, илемлӗ ҫырулӑх крушокӗ т. ыт. те ӗҫлеҫҫӗ. Клуп уҫӑлни нумайах пулмаст, анҗах малтанхи уйӑхрах унта куллен 50—60 ҫын уҫпек хӗрарӑмӗсем ҫӳренӗ. Клупра вӗсем 200 җлене ҫитнӗ.

Кунсӑр пуҫне телекаткӑсемпе ӗҫлес ӗҫ те, йатне тунӑ прокрам тӑрӑх, вӑйлӑ пырат. Телекаткӑсем 1924-мӗш ҫулта 1.325 ҫынна ҫитнӗ;

вĕсенђен 500 телекаткă таран çавăнти тĕп халăх хĕрарăмсенђен пулнă.

Советсене тĕреклĕлетес ĕçе хĕрарăмсене хутшăнтарни те паллă вырăн йышăнса тăрат, ăна та ăнăçса пыракан йапала тесе кăтартса хăвармалла. 1923—24-мĕш çулсенђе советсене суйланă ђух, пĕтĕм Турккестан оплăçĕсем тăрăх, тĕп халăх хĕрарăмĕсем суйлав кампанинђе хастарлă ĕçленĕ. Хаљ епĕр советсенђе 287 хĕрарăм пуррине пĕлетпĕр, вĕсенђен 40 çын ĕçтăвакан тытăмсен ђленĕсем. Пĕтĕм Турккестанри советсен йулашки сиесĕнђе тата пилĕк хĕрарăма Турккестан Тĕпĕçтăвкомне кӳртнĕ.

## Армени.

Армени, Çурçĕрти Капкас халăхĕсен оплă-çĕсемпе респуплĕкĕсем пекех, пĕтĕмĕшпех çĕр ĕçĕпе пурăнакан çĕр-шыв. Промышлĕннăçĕ унăн вăйлах мар: пурĕ те рис тасатакан савăтсемпе конççервă савăђĕсем çеç, вĕсем те кăл-кал - сайра çĕрте çеç; тата мамăк тасатмалли машшинсем пăртак пур, вĕсем те ђас-ђасах —мамăк пĕтĕмпех пĕтсе пынă пирки—ĕççĕр ларaççĕ.

Респуплĕкре, йышлă пысăк хуçасемпе промысла претприйаттийĕсем çук пирки, пролеттариат та сахал. Пĕр мĕлйун икçĕр пин çын çинђе пĕрлешсе çитнĕ ĕçлекенсем пурĕ те 14 пин çурă çеç, хĕрарăмсем те виçĕ пин кăна. Армениври хĕрарăм пайĕсем ђи малтан (хăйсем пуçлансанах) халăх хушшинђе ўкĕтлесе—акиттатсилесе ĕçлеме тăрăшнă.

Економĕк çĕнĕ политтĕкне куççассăн, ĕççĕр тарăхакан хĕрарăмсен çарĕ йышлăланса кайнă. Ку йапала хĕрарăм пайĕсене—хĕрарăм

пурăнăçне екксномĕк тĕлĕшĕнђен çăмăллатса, ун ĕçин хакне ўстермешкĕн тăрăшмаллине кăтартнă; хулари ĕç хĕрарăмĕсем хушшинђе те, йалта та куљттурăпа политтĕк ĕçне вăйлăлатмаллине асăрхаттарнă. Çапла хĕрарăм пайĕсем çĕнĕ ĕçе тытăннă; вĕсем тăрăшнипе хĕрарăм ерттелĕсем тунă, хĕрарăмсене техниккумсемпе хапрăк-савăтсене вĕренме йанă, ађапа амăшне сыхлакан, тата тĕрлĕ сывлăх упракан пункăтсем уçнă, йулашкинђен—халăха апатланмашкăн пĕрлешўлĕ апат-çимĕç вырăнсем тунă.

Хут пĕлменлĕхе пĕтерме хытă тăрăшаççĕ: телекаткăсен хушшинђе ăна питĕ ăнăçлă туса ирттернĕ. Шкулсене нумайлатмашкăн мĕн вăй çитнĕ таранах тăрăшаççĕ.

Ериваљ хулинђе мăссăљман хĕрарăмĕсем валљи клуп уçнă. Клуп çумĕнђе хут пĕлменлĕхе пĕтермелли пунктă тунă. Клупра ђасђасах пухусем, лексисем, тата çпектаккăљсем те туса ирттереççĕ. Çавăнтах тата сут-йĕр тĕлĕшĕпе ĕçлекен конссуљтатси уçнă.

Ĕç хĕрарăмĕсене тивĕç йенђен хўтлес тесе, Арменири хĕрарăм пайĕ хăйĕн претставиттĕлĕсене вырăнсенђи х у т а кĕрекенсен

пӳровӗсенҫе ӗҫлеме уйӑрнӑ; вӗсем хӗрарӑм тӗлӗшпе тапраннӑ ӗҫе пур ӗҫе те хутшӑнаҫҫӗ.

Ӗҫ хӗрарӑмӗсем ҫук пулсан та—телекаткӑсен инҫтиттуҫӗ Арменире хисеплӗ вырӑн йышӑнса тӑрат, вӑл пур ҫӗрте те паллӑ.

Пӗлтӗр пуҫтарӑннӑ телекаткӑсен шуҫӗ 500 ҫынна ҫывӑхарнӑ, ҫулталӑк хушшинҫе 210 пуху пулнӑ. Кайранхи суйлав камппани ултӑ уйесра 614 ҫын пухнӑ. Телекаткӑсем партти ирттерекен пур кампанисенҫе те хытӑ тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ; хӑйсем йерипенех патшалӑхпа халӑх пӗрлешӗвӗсене кӗрсе, вӗсен ӗҫне хутшӑнса пыраҫҫӗ.

Телекаткӑсен халӑх хушшинҫи ӗҫӗ ҫакӑнтан та лайӑх палӑрат: вӗсен хастарлӑхӗпе ҫулталӑкра ҫиҫӗ уйес тӑрӑх хӗрарӑм конферентсийӗсем туса ирттернӗ, вӗсенҫе 1.000 хӗрарӑм ытла пулнӑ—пурте парттире тӑманнисем; тата 920 пӗрлешӳлӗ телекат пухӑвӗ ирттернӗ. Партти орканисатсийӗсем телекаткӑ инҫтиттутне питӗ хытӑ асӑрхаса тӑраҫҫӗ; мӗншӗн тесен, унтан вӗсем советпа партти ӗҫӗнҫе тӑрӑшма пултаруллӑ—хастар вӑйсем илсе усӑ кураҫҫӗ.

# Такестан.

Такестан СС Респуплӗкӗнҫе хӗрарӑм хушшинҫе ӗҫлемелли условисем лайӑх мар. Кеокрафипе етнокрафи тӗлӗшӗнҫен Такестан пек нумай тӗрӗлӗ ҫӗр-шыв урӑх тупма хӗн. Ыттисемпе танлаштарсан, унӑн талккӑшӗ те пысӑках мар; анҫах ҫав пӗҫӗк ҫӗрте 6 тӗп ҫӗлхе, тата 33 тӗрлӗ калаҫусем (нареҫисем). Ҫак нумай ҫӗлхесемсӗр пуҫне тата урӑх ҫӑрмавсем те нумай унта: йалсем (аулсем) пӗр-пӗринҫен айакра, пырса кӗмелле мар тусем хушшинҫе, сапаланса ларaҫҫӗ, вӗсене йуланутсӑр ниӑҫтан тупса кӗме те май ҫук; еккономӗк тӗлӗшӗнҫен мӗскӗне йулни, халӑх хушшинҫи куљтурӑсӑрлӑх, тӑтӑшах хут пӗлменни (вырӑнӗ-вырӑнӗпе пӗри те вӗренмен), мулласем сарнӑ тӗн сӗрӗмӗ, авалхи феоталлӑ пурӑнӑҫ йӗрки, йулашкинҫен ҫӗр ҫул ӗлӗкрех ҫирӗплетнӗ шариатпа атат ултавӗ. Ҫак хӗнлӗхсем Ҫурҫӗрти Капкасӑн пур респуплӗкӗсемпе оплӑҫӗсемшӗн те пӗр пекех сисӗмлӗ, пӗр пекех

йывăр. Çапах та, ђухăнлăхпа тĕттĕмлĕхĕн хулăн хуппи витĕр, ту халăхĕн улталаннă тăн-пуçĕ витĕр, пирĕн куç умне çĕнĕ опђăс-твă хурмисем шăтса тухаççĕ; çĕнĕ—совет куљттурĕ ӱссе çитĕнет.

Арçын пуç пулса кил-йышне пăхăнтарса пурăнасси пĕтсе пырат; ирĕклĕхе ăнланса çитнĕ хĕрарăмсем хăй тĕллĕн пурăнмашкăн тăрăшаççĕ. Çавăнпа та тĕрлĕ хĕрарăм ерттелĕсем тăвас ĕç сиксе тухат.

Капкасри происвотствăра ĕçлекен ту хĕр-арăмĕсене пĕрлештерсе тăракан маçтеркуй-семпе ерттелсем халĕ 30 шутланат, вĕсенђе пурĕ 740 хĕрарăма йахăн тăрат. Ерттел тĕлĕшĕпе ђи малта пыраканни—Корски респуплĕкĕ. иккĕмĕш вырăна вара Такестан йышăнса тăрат. Ерттелсемпе маçтерскуйсем тавра çу-тăлăх ĕçĕ те ђăмăртанса, вăйлăланса пырат; ăна хĕрарăм пайĕсем çул кăтартса параççĕ.

Ђăнах та, Çурçĕрти Капкасра, Капкас хыçĕнђи пекех, лайăх орканисатсиленнĕ тĕрлĕ çутăлăх уђрештенийĕсене пĕрлештерсе тăракан хĕрарăм клупĕсем çук. Анђах уйрăм шкулсемпе ликпунктсем, пиплиоттексемпе вуламалли çуртсем, тĕрлĕ крушоксем, ађапа

амăшне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен уђрештенисем—пур çĕрте те пур.

Хĕрарăмсен крушокĕсем йерипен ђăн тетелекат пухăвĕсем пулса пыни те палăраť. Халђ Такестанра, Корски Капартара, Атыкейре Карађђайра, тата Ђеђђенре пурĕ 1353 телекаткă шутланаť. 408 хĕрарăм хула совеђĕпе йал канашĕ тата ĕçтăвком ђленĕ пулнисем те пур; вĕсенђен çурри ытла Корски СС Респуплекĕн хĕрарăмĕсем.

Халăх хушшинђи ĕç ăнса пынине 1923-мĕш çулта вак халăх оплăçĕсем тăрăх 26 конферентси ирттерни те лайăх кăтартаť, вĕсенђе ту ĕçĕнђи хĕрарăмсем 1000 çын ытла пулнă. Кунсăр пуçне тата йалсем тăрăх 191 пуху туса ирттернĕ, унта 4780 хĕрарăм пухăннă; хуласенђе пулнă 350 пухура 12 474 хĕрарăм ĕçленĕ.

Çак иртекен конферентсисемпе пĕрлешӳлĕ пухусем—Капкас хĕрарăмĕ револђутсийе ђăнтан ăнланнине, унăн кăмăлĕ револђутси майлă çавăрăннине лайăх кăтартса параççĕ.

Вăл пухусенђе ађапа амăшне сыхласси çинђен, хулăм укçине (калым) пĕтересси çинђен, т. ыт. те сӳтсе йаваççĕ Йулашки вăхăтра

пĕрлешӳлĕ пухусенҫе ҫас-ҫасах хĕрарӑм тивĕҫĕпе ҫыхӑнса тӑракан ыйтусем пирки сӳтсе йавнӑ; вӑл тĕлĕшпе пухусем пит хисеплĕ вырӑнта тӑраҫҫĕ.

1924-мĕш ҫулта, пуш уйӑхĕнҫе, Влатикапкасра хĕрарӑм тивĕҫне хӳтлес пирки йури канашласа ирттернĕ.

Корски респуплĕкĕн Тĕпĕҫтӑвкомĕ, ҫуралӑхӑн йулашкисене ҫасрах пĕтерес тесе, хĕрарӑм тивĕҫĕ ҫинҫен ӑрасна постановлени кӑларнӑ Вӑл постановлени ĕҫ хĕрарӑмĕшĕн хӑйне йевĕрлĕ текларатси пек пулса тӑрат. Унта Тĕпĕҫтӑвком, хĕрарӑмӑн йупа уйӑх револютсийĕ ҫирĕплетсе пынӑ краштӑн правине, кил-йыш хушшинҫи тивĕҫлĕхе, тата пурлӑх тивĕҫне те кӑтартса парат.

Ҫаплах Такестан Тĕпĕҫтӑвкомĕ те, хĕрарӑм тивĕҫне хӳтĕлес тĕлĕшпе, уйрӑм текрет кӑларнӑ. Ҫав ĕҫшĕнех темиҫе вак халӑх респуплĕкĕсемпе оплӑҫĕсем тӑрӑх, хĕрарӑм пайĕсем тӑрӑшнипе, хĕрарӑмсенҫен—сут ҫленĕсене, халӑх саҫҫетаттĕлĕсене, тата хута кĕрекенсен коллекин ҫленĕсене те суйланӑ.

Кунта кӑтартнӑ ҫыхвӑрсем пысӑк мар, анҫах вĕсем ҫамрӑк ӑру ӳссе тĕреклĕленсе пынине палӑртаҫҫĕ.

Хĕрарăм пайĕсем йертсе пыракан темиçе тĕрлĕ сарлака ĕçпе ту çинђи хĕрарăмăн тулашĕ те улăшăнат̆. Епĕр хăй мĕскĕнлĕхне çеç куракан ђура пулнăскер, пайан вăл хăй çине (хăйне арçынпа танах шутламасан та) етем çине пăхнă пек пăхат̆. Капкасăн малашнехи екикономĕк тĕреклĕхĕ, тата хăй те йерипен технĕк ĕçне вĕренсе-хăнăхса пыни — ђасах ăна ђăнтан арçынпа пĕр тивĕçлĕ туса хурĕ, пĕр тивĕçлĕ пулмашкăн хастарлансах малалла йарса пустарĕ.

---

## Кăркăс, Пушкăрт, тата Тутар респуплĕкĕсем.

Кăркăс, Пушкăрт, тата Тутар респуплĕкĕнђи хĕрарăмсем те ту хĕрарăмĕн çулĕпех пыраççĕ. Ку респуплĕксенђе епĕр урăхла хуçайства условийĕсем, урăхла пурăнăç йĕрки, урăх йăласем тĕл пулатпăр; анђах çакăнпа пĕрлех хĕвелтухăçри пекех, хĕрарăм телейĕ ĕмĕрсем тăрăх пусмăрланса хурлăха йулнине куратпăр.

Хĕрарăм—(кил хушшинђи) хуçайствăна тăвакан ĕççынни. Вăл пур кил ăш-ђиккинђи ĕçе те тирпейлесе тăрат: сĕт-турăх тавраш хатĕрлет, выљăх-ђĕрлĕх пăхат, килтех ков-йорсем (кавирсем) тĕртет, кантра йават, мамăк тутăрсем çыхат, т. ыт. те.—Çак темиçе тĕрлĕ ĕçпе вăл кăвак çутăлла пуçласа хĕвел анса ларињђен аппаланат; хăй кил картинђен урăх вăл ниăçта та тухса кураймаст. Хĕрарăм—ĕççынни, хăйĕн пекех ўссе çитĕнекен ĕççын-нисен амăшĕ,—акă ĕнтĕ хĕрарăм ролĕ, унăн

екконоМёк тивлеђё. Кун çумне тата—çемйере хёрарăм арçынна пăхăнса тăнине, унтан мăссăљман тёнёпе муталанса пётнине хушсан,— хёрарăмăн пурăнăç йёркипе тивёç тивлеђё те лайăх палăрё.

Çакăн пек пурăнăçлă хёрарăма тёл пулђё ёнтё пирён револ̂утси. Ђи малтан хёрарăмăн кил-йыш хушшинђи пурăнăç йёркине тёпётымарёпех урăхлатас ёç сиксе тухрё. Ку тёлёшпе вырăнсенђе—нумай арăмпа пурăнас йăлана, кăмканпа çăвăнассине, тата хёрарăма сутса илессине пётересси çинђен постановленисем кăларкаланă. Çак тискер йăласене пётересшён парттипе совет орканисатсийёсем те мён вăй çитнё таранах хытă тăрăшнă. Хёрарăмăн кил хушшинђи пурăнăçне ак çак фактă та питё аван кăтартса парат: Кăркăс респуплёкёнђе темён ђухлё хёрарăм—тăтăшах упăшкисенђен уйăрăлнă.

Арçын тытса тăракан çемйе сăнђăрне татса, хăй тёллён пурăнмалли ирёклё çул çине тухасшăн çунакан хёрарăма пулăшас тесе,— хёрарăм хушшинђе ёçлекен пайсем хёрарăм ерттелёсем тума тытăнаççё. Çавăн пек ерттелсем Кăркăс респуплёкёнђе 10, Пушкăрт

респуплĕкĕнђе—16. Хĕрарăм пайĕсем вĕсене пĕтĕм вăйпа професçи орканисатсийĕсене кӳртме тăрашаççĕ. 1924-мĕш çулта Кăркăс респуплĕкĕнђе 12.650 хĕрарăм профсойус ђленĕсенђе тăнă, Пушкăрт респуплĕкĕнђе—8.940 çын пулнă, тутарсен—7.214.

Çакăнпа пĕрлех хĕрарăмсем совет ĕçĕнђе те йышлăланса пыраççĕ. Кăркăс респуплĕкĕнђе 1922-мĕш çулта хĕрарăмран пĕр совет ђленĕ те пулман. Халĕ вĕсем хула совеђĕсенђе—104-ăн, йал канашĕсенђе—988-ăн, ĕçтăвкомсенђе—134-ăн. Пушкăрт респуплĕкĕнђе: хула совеђĕсенђе—46 хĕрарăм, йал канашĕсенђе—97, ĕçтăвкомсенђе—6. Тутар респуплĕкĕнђе: хула совеђĕсенђе—65, йал канашĕсенђе—314.

Партти ĕçне туса тăракан хĕрарăмсен шуђĕ те ӳсет: Кăркăс респуплĕкĕнђе П. С. К. (п) Парттинђе 448 хĕрарăм тăраççĕ, Комсомол ђленĕсем — 2.081; Пушкăрт респуплĕкĕнђе партти ђленĕсем—255, Комсомолра 532 хĕрарăм; тутарсен: парттире—215 хĕрарăм, Комсомолра—982.

Пĕрлешсе ђăмăртаннă хĕрарăмсем хушшинђе ĕçленисĕр пуçне, çак 3 респуплĕкĕн хĕрарăм пайĕсем халăх хушшинђе те ĕçлеççĕ.

Вăл ĕçе вĕсем сйессем, конферентсисем, канашлусем урлă туса пыраççĕ. Сйессемпе канашлусем Кăркăс, Тутар, тата Пушкăрт респуплĕкĕсен хĕрарăмĕсене политтĕк ĕçĕсем çинђен те, хĕрарăма ђуралăхран хăтарассин мелĕсемпе çулĕсем çинђен те тĕплĕ сўтсе-йавса ăнлантараççĕ.

Телекаткă инçтиттуђĕсем çак респуплĕксенђе пуринђе те пур. Йулашки пуçтару хыççăн: Кăркăсра—4.932 çын, Пушкăртра—3.813, Тутар респуплĕкенђе 4.215 телекаткă курăннă.

Ĕмĕрхи ђуралăх сăнђăрĕпе тĕн сĕрĕмĕ йерипен йерипенех сирĕлсе пыраť. Ун вырăнне—хĕрарăмпа арçын çемйере те, халăх хушшинђе те, политтĕк пурăнăçĕнђе те ђăнтан пĕр тивĕçлĕ краштăнсем пулса пыни палăраť.

## Ҫăваш респуплĕкĕпе Мари (ҫармăс) оплăҫĕ.

Йупа уйăхĕнҫи револҫутси пирĕн ҫăваш хĕрарăмне те, Атăл таврашĕнҫи ытти вак халăхсенни пекех, ĕлĕкхи айванлăхран вăратрĕ. Вĕсене арҫынсемпе пĕр тан тивĕҫлĕ краштăнсем туса хуҫĕ. Пĕтĕм Сойусри Комуниссен (полҫшевиксен) Парттийĕ пирĕн ҫăвашпа ҫармăс хĕрарăмĕсене, ĕлĕкхи ылханлă саманара вĕренмесĕр тĕттĕме тăрса йулнăскерсене, ытти малта тăракан халăхсемпе танлаштарасшăн тăрăшаҭ. Вĕсене вĕрентсе ҫутта кăларасшăн, хуҫайствă тĕлĕшĕнҫен никама пăхăнмасăр хăй пурăнăҫне хăйĕн вăйĕпе йусассине ăнлантарасшăн, кунсерен канмасăр ĕҫлет. Хĕрарăма, хăй валҫи ирĕклĕ пурăнăҫ тумашкăн, хăйнех тăрăшма хистет.

Вулакан вуланă страницсăсенҫен кураҭ: кашни халăхăн пурăнăҫ йĕрки, тĕрлĕ йăлисем хуҫайствă хурминҫен килеҫҫĕ; вĕсем пĕрпĕринпе ҫирĕп ҫыхăнса тăраҫҫĕ. Ҫавăнпа

пирĕн ђăваш хуçайстви йĕркине кăшт кăна пăхса тухас пулаť; мĕншĕн тесен, хĕрарăмсен хушшинђи ĕçе илсе пынă ђух вăл кирлех.

Ђăвашсем мĕнле хуçайствăпа тăранса пурăнаççĕ?—Çĕр ĕçĕпе. Суха сухалаççĕ, тырă-пулă тăваççĕ, выљăх-ђĕрлĕх усраççĕ; çав хушăрах, çĕр сахал пирки, хăшĕ-пĕри тĕрлĕ ăсталăхпа аппаланаççĕ: ђăпта çапаççĕ, кăмрăк тăваççĕ, тикĕт йухтараççĕ, тукăн аваççĕ, ђашкă-ђиркĕ-çăпала туса хатĕрлеççĕ.

Хапрăк - савăтсем çук пирĕн. Хĕрарăма кăна мар, арçынна та, хапрăк-савăтра ĕçленине питĕ сайра курма пулаť. Ђăваш хĕрарăмĕ уй-хирлĕ, йе вăрманлă ђăтлăхлă çĕрте çуралаť те, çавăнтах пурăнса ĕмĕрне ирттерет. Пысăк савăтсене, аслă хуласене вăл вилиђђен те кураймасť. Унăн ăсĕ-шухăшĕ çине ђухăн йал, уйлăх-улăхлăх, вăрман-ђăтлăх çеç хăйсен пиђетне çапаççĕ. Тĕнђере мĕнле пысăк хуласем, тинĕссем, çырмасем, тарăн шахтăсем, темиçе-шер пин çын ĕçлекен хапрăк-савăтсем, аслă шкулсем, театтăрсем пур; анђах вĕсем пĕри те унăн шухăшне пымаççĕ.

Тата тĕрлĕ йăласем çинђен пĕр-ик сăмах асăнар. Арçынсем тахçанах мана пуçланă

авалхи йӑласене хӗрарӑм пайан кунђђенех питӗ лайӑх астуса тӑраҭ. Унӑн ађи-пӑђине вилӗ те тытаҭ, ӑншӑрт ҫилӗ те ӳксе ђирлетет. Вӗсене вӑл ђӗлхине мӗнле сӑмах килет—ҫавна каласа тӗтӗрет, вилӗсен ҫиллине пӑтӑпа ђӳклӗсе „ҫемҫетет“, хӑйӗн вӑйӗ ҫитеймесен, йумӑҫа кайса пуҫҫапаҭ. Йумӑҫ ҫине шанђӑк пӗтсен тинех, вара тухтӑр патне пыраҭ. Унӑн выђӑхне, ађи-пӑђине ҫын мӳхтама йурамасҭ, куҫӑхаҭ. Ӗҫ пуҫлама кашни кунах йурамасҭ, мӗншӗн тесен, кунсем телейсӗррисем те пур иккен: йун кун пуҫланӑ ӗҫ нихӑҫан та ӑнмасҭ тет, тунти кун йывӑр кун тесе пуҫламасҭ. Ахаљ кун, праҫник мар ђух, килӗшӳлӗ тумланма йурамасҭ, ҫын кулаҭ.

Ҫакӑн пек йапаласем питӗ нумай пирӗн ђӑвашпа ҫармӑс хӗрарӑмӗн. Ҫак йӑласем хушшинђе хӗвелтухӑҫ йенђи халӑхсенђен авалтанпа ӳкерӗнсе йулнисем те курӑнаҫҫӗ. Вӗсем ҫаксем: хӗре кађђа панӑ ђухне хулӑм укҫи илесси (ҫармӑссен—одно), хӗр вӑрласси, ҫӗнӗ ҫын туй пӗтиђђен пӗркенђӗкпе ҫӳресси, ваттисен умӗнђе ҫара пуҫӑн йе ҫара уран ҫӳреме намӑсланни, йут арҫынпа калаҫма именни, ҫул

çӳременни, пуç тумĕпе кăкăр-мăй таврашне кĕмĕлпе илемлентерӳ, тата ытти те.

Хĕрарăм хушшинђе ĕçлекен пайсем çаксене пурне те астуса тăраççĕ, вĕсен тăрăх тăвас ĕççене килĕштереççĕ.

Совет влаçĕпе комуниссен парттийĕ хĕрарăма пур йенђен те арçынпа пĕр тан тивĕçлĕ тăвасшăн тăрăшаççĕ, тесе маларахах каланађђĕ; халĕ ăна тĕплĕрех пăхса тухар. Хађхи вăхăтра хĕрарăм арçынпа пĕр танах çĕр йышăнат. Çурђĕ-хуралти те, ыђăхĕ-ђĕрлĕхĕ те кађђа тухсанах упăшкипе пĕрле хисепленет: упăшкинђен уйăрăлас пулсан та, вăл хăйне тивĕçлине илме пултарат. Кам хăй кăмăлне килет, çавăнпа мăшăрланма пултарат. Ĕлĕкхи пек ăна хулăм укçилле никам та ирĕксĕр тытса сутма пултараймаст; ыђăх пек вăрлама та йурамаст. Упăшки ăна: „есĕ ман арăм, епĕ мĕн тăвас тенĕ çавна ту“ тесе ырăнсăр пăхăнтараймаст; айăппа та, айăпсăр та хĕнесе çĕмĕреймест.

Вăл кăна мар, совет влаçĕ хĕрарăма мĕн пур хуçайствă тĕлĕшĕнђен арçынпа тан ĕçлеме вĕрентет; тĕрлĕ патшалăх ĕçĕсене те хутшăнтарма тăрăшат. Ленин хăй ђĕрĕ ђухнех:

„кашни йашка-çăкăр пĕçерекенех патшалăха тытса тăма вĕрентĕр“ тесе каланăђђĕ. Çав сăмахсене совет влаçĕ халĕ йерипен ĕçе кўртсе пыраť.

Пирĕн ђăваш арăмĕсем те совет респуплĕкĕн ĕçне йусама çуллен çул нумайраххăн, вирлĕрех вĕренсе пыраççĕ. Акă сăмахран: пирĕн респуплĕк тăрăх иртнĕ йулашки суйлавра 24932 хĕрарăм пулнă. Вĕсенђен: йал канашĕсене 647 (7,9%), вулĕçтăвкомсене 5 (2,7%), уĕçтăвкомсене 6 (6,9%), Ђăваш респуплĕкĕн Тĕпĕçтăвкомне 7 (10, 8%) хĕрарăм суйланнă. Арçынсене пăхнă çĕрте ку прођђăнсем сахалтарах, анђах вăл çуллен çул ўссе пыраť.

Совет çĕр-шывĕн тулашĕнђе хĕрарăмсене суйласа пĕрне те кўртмеççĕ. Мĕншĕн тесен, унта капиталисăмлă йĕрке: патшалăха ђи пуйан çынсем анђах тытса тăраççĕ.

Пĕр-пĕрне пулăшакан хресђен комиттеђĕсене пирĕн респуплĕкре çакăн ђухлĕ хĕрарăм суйланнă: йалсенђе—336, вулăсри комиттетсене—4, уйесрисене—6, Тĕп комиттета—3. Çав комиттетсен ревиçи комиççийĕсене мĕн пурĕ 264 хĕрарăм кĕнĕ. Ку комиттетсем

хĕрарăма пушшех те кирлĕ, мĕншĕн тесен: йе упăшки вилесси пур, йе салтака кайаť-и, вĕсем ăна пулăшмалла, пулăшаççĕ те. Ĕлĕкхи саманара мĕскĕн хĕрарăм çĕрне туртса илсен те, пуйан çын çăварне пăхса тăраҫҫĕ, куланай ытлашши тӳлеттерсен те, шарламасťҫĕ,—макăрсах ирттереҫҫĕ. Çавăнпа, совет влаçĕ вĕрентнĕ тăрăх, хĕрарăмсем хăйсемех пĕрне-пĕри пулăшас ĕç йенелле сулăнаççĕ Пухăва кайса кăшкăрсан, ытти хĕрарăмсене те ҫĕнсен, куштансем ытлах пусмăрлама пултараймаççĕ вĕт,—совет влаçĕ ҫухăнсене хӳтĕлет.

Копператси ĕçĕнҫе те хĕрарăм кайа йуласшăн мар. Килте-çуртра кирлĕ йапаласене лавкаран хĕрарăм нумайтарах илет вĕт. Копператтив лавкисем лайăхрах тавар тытаççĕ, ахаљ усламăçсенҫен йӳнерех те сутаççĕ. Пĕтĕм Ҫăваш респуплĕкĕпе халĕ копператтивсенҫе 1730 хĕрарăм ҫлен пулса тăраççĕ. Ку мĕн пур ҫленсен 11% пулаť.

Малта епĕр ĕлĕк çырăва вĕрентмен пирки пирĕн ҫăваш арăмĕ те, хĕвелтухăçри хĕрарăм пекех, тĕттĕме йулнă тенĕҫҫĕ. Саккун тăрăх арçынпа пĕр тивĕçлĕ пулсан та, хĕрарăм хăй пĕлменлĕхĕпе халĕ те тĕрлĕ ĕçсенҫе

арçынтан кайра тăраť. Кайра тăни çӳлте кăтартнă ђыхвăрсенђен аван курăнаť. Хăвăртрах малалла йарас тесе, хĕрарăм пайĕсем ăна вĕрентме тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе мĕн тăваççĕха хĕрарăм пайĕсем?—Кашни вулăсри комуниссен партти йађђейккинђе хĕрарăм ĕçне пăхса тăмашкăн пĕр çын (волорканисаттăр) суйлаççĕ. Вăл вара, йалсерен хĕрарăмсене пуçтарса, пухусем тăваť. Пухусенђе вĕсене вĕрентет: çĕнĕ саккунсемпе паллаштараť, тĕрлĕ халăх хушшинђи орканисатсисенђе йепле ĕçлесси çинђен, тĕнђере мĕн пулса иртни,—мĕн пуласси çинђен каласа параť; ађана мĕнле пăхса ӳстересси çинђен, ђирђĕртен йепле сыхланмалли çинђен, лайăх усăлă апат йепле пĕçересси çинђен,—пурне те тĕплĕ ăнлантараť. Унтан кашни йалтанах темиçешер телекаткă суйлаççĕ телекаткăсене вулăса пуçтарса пухусем туса пурăнăçа çăмăллатасси çинђен канашлаççĕ.

Пирĕн респуплĕкре халђи вăхăтра 7048 телекаткă, кашни вулăсрах пĕр волорканисаттăр. Çак телекаткăсем хăйсене вулăсра мĕн каласа вĕрентнине йалти хĕрарăмсене каласа ăнлантараççĕ. Вăл вулăсри телекат пухăвĕсем

пирĕн ђăваш арăмне питĕ нумай усă кӳреççĕ: хĕрарăм пурăнма вĕренет—унăн кусĕ уçăлаť, пурăнăç мĕн иккенне пĕлсе çитет, çавăнтах тата вулама-çырма та вĕренет. Кĕнеке вулама вĕренни усă кӳресси паллах. Кĕнеке вуласан хĕрарăм пĕр-пĕрне çимест, пĕр-пĕрин çинђен ытлашши каламасť; çавăнпа тĕрлĕ хирĕçӳ те сахал пулаť. Вăл тĕлекаткăсенђен питĕ хастарлисене тĕрлĕ пысăк шкулсене вĕренме те йараççĕ.

Пирĕн ђăваш хĕрĕ те ĕлĕкхи пек пăђăх пурăнасшăн мар: комсомола сулăнаť,—вăл комсомол ăна малашнехи пурăнăçа çăмăллатма вĕрентнине лайăх пĕлет. Р.Ç.Л.К Сойусĕнђе пирĕн республĕкре 1161 хĕр ађа тăраť. 2826 хĕр ађа пионер ушкăнĕсенђе тăраççĕ. Кусем пурте малашне çĕнĕ пурăнăç тăвас ĕçре ђи малта пыракан хĕрарăмсем пулаççĕ.

Республĕкри хĕрарăм пайĕ, ђăваш арăмĕсен хушшинђи ĕçе малалла йарасшăн тăрăшса кăçал çулталăк хушшинђе волорканисаттăрсем вађђи икĕ курс уçрĕ; вăл курссенђен 150 хĕрарăм вĕренсе тухса йалсене ĕçлеме салантĕç.

Мари (çармăс) оплăçĕнђе хĕрарăмсен хушшинђи ĕç ак çакăн пек тăраť. Унта хĕрарăм-

сем пирĕн Ђăваш респуплĕкĕннинђен виçĕ хут сахалтарах—155 пине йахăн; телекаткăсем 2858 çын. Пĕлтĕр, 1925-мĕш çулта 580 вулăс пухăвĕ тунă; унта мĕн пурĕ 3600 хĕрарăм пулнă. 103 конферентси ирттернĕ, 2575 хĕрарăм унта пухăннă. Çав пухусенђе 549 тĕрлĕ ыйту сӳтсе йавнă.

Тырă ĕçĕ вăхăтĕнђе, ађаллă арăмсене çăмăллăх кӳресшĕн, 42 сырăш (йаçлĕ) уçнă. Сырăш вăл çамрăк ађасене пĕр çĕре пухса амăшĕсем ĕçленĕ вăхăтра пăхакан çурт; унта ађасене çитереççĕ, выљатаççĕ, хура-марине тасатаççĕ, тата ытти йенђен те астăваççĕ.

Пирĕн ђăваш арăмĕ те, ытти халăхсенниле пĕрле, пĕр тӳрĕ çĕнĕ пурăнăç çулĕпе куллен кунах малалла утать. Малашнехи телейлĕ пурăнăçа хăвăртрах тăвас ĕç—ђăваш арăмĕнђен хăйĕнђен килет. Çавăнпа пурте пĕр канмасăр алла аллăн тытăнса ирĕклĕ, ăслăлăхлă пурăнăçшăн ĕçлер.

## Ойрат, Пурет-Монкол, Калмăк, тата Йаккут ҫĕрĕсем.

Епĕр пăхса тухмалли йулашки ушкăнри респуплĕксемпе оплăҫсенҫе те—Ойраттире, Пурет-Монколире, Калмăк оплăҫĕнҫе, тата Йаккуттире,—екkономĕк тĕлĕшĕнҫен вĕсем кайа йулнă пулин те,— херарăм хушшинҫи ĕҫ ҫаплах талккăн сарăлса пыраť.

Ҫапах та, пур тĕл пулакан ҫăрмавсене пăхмасăр, ĕҫ хĕрарăмĕн пурăнăҫне пур йенҫен те ҫăмăллатса, ăна ҫуралăхран хăтарас тĕлĕшпе нумай тунă. Кăна хĕрарăмсем советсене тĕреклетес ĕҫе хутшăнни лайăх кăтартса параť: ҫапла, Ойраттире йал канашĕсенҫе—160 хĕрарăм, вулĕҫтăвкомсенҫе—3; Пурет-Монколире: хула совеҫĕсенҫе—35, йал канашĕсенҫе—70 хĕрарăм ҫлен.

Калмăк оплăҫĕнҫе хĕрарăмсем питĕ кайра тăраҫҫĕ, ҫыру пĕлекенсем ҫукпа пĕрех. Шкулсем револҫутсиҫҫен пĕртте пулман. Револҫутси хыҫҫăн пурăнăҫ пĕтĕмпех улăшăннă. 1922-мĕш

çулăн иккĕмĕш çурçулне вара: 91 шкул, 3 професçи шкулĕ, оплăçри совпартшкул, 13 çитĕннисене вĕрентмелли шкул, 14 пиплиоттĕк, 14 вуламалли çурт, 20 халăх çурђĕ, Калмăк театтăрĕ, тата 14 ађа çурђĕ пулнă; ађа çурђĕсенђе 808 ађа пураннă.

Анђах, çак кăтартнă çуталăх уђрештенийĕсен ĕçĕ, пурин те, паллах—темиçе çултан тин çĕкленсе кайма пултарнă.

Çапах та хĕрарăм пайĕсем, çине тăрса хастарланса ĕçленине, çав акăш-макăш ђăрмавсене пурне те çĕнтерсе пыраççĕ. Епĕр куратпăр: хĕвелтухăçĕнђи ĕç хĕрарăмĕ çуллен çулах халăх ĕçне вĕренсе ăна вăйлăран вăйлă тума тăрăшаť. Пĕр ўпкелемесĕр ђĕнми выђăх шутĕнђе хĕсĕнсе пурăнакан ђура хăй сассине хăпартма пуçлаť. Хăйне пролеттари револютсийĕ панă тивлетсене ђăнтан илесшĕн, пĕр тивĕçлĕ краштан пуласшăн çунаť. Малтан вăл иккĕленсе те тăраť, анђах пурăннă çемĕн хăйулланса çитсе, комунисăма ăнланма пуçлаť. Малтан пĕререн-икшерĕн сапаланса утакансем хыççăн вуншарăн, çĕршерĕн вĕсем хыççăн пиншерĕн çĕкленсе, çирĕп ĕретсемпе, пысăк

шанђăкпа, малалла—хěрлě йалав вěлкěшекен çěрелле—карласа пыраççě.

Вěсен утăмěсен шавě вăйлăланнă çемěн вăйлăланнине илтсе, çěрěн $^5/_6$-мěш пайěнђи пуршуй-ђуниллисем тěлěнсе пуçěсене çěклеç-çě. Йепле капла пулма пултарђě-ха?—теççě вěсем,—çийеле тухнипе савăнакан пољшевисăм вăл пăђăхнă ěçлекенсемпе хресђенсем хыççăн, „хăватлă халăх“ пусмăрěнђе нăйкă-шакан инçетри ěççыннисем хыççăн, етем ăрăвěн ђи хурлăхлă пайне, ђуraран ђурана —хěвелтухăç ěç хěрарăмне те çěклесе, пěр-лехи ěçшěнех—пěр **çулпах** илсе пыма пултарать“.

Пулма пултарайманни те ěçрě пулса пы-нине курса, хăйěн хăватлăхěпе ђикěсěр ирěк-не сыхлас тесе, пуршуаçи пěтěм вăйне пуçтарса мопилисатсилет; çěнěрен çěнě мелсем тупса, хăйěн çěр-шывне комунисăм кěрлесе кěрес-рен сыхлама тăрăщать.

Анђах, кивě тěнђен ђикки çинђе, кому-нисăм хěрлě йалавě айěнђе, пусмăрлисенђен те пусмăрлă хěвелтухăç хěрарăмě тăрса мěн пур йут çěр-шыври тăванěсене алă панă ђух, киттай çтенисем те, мăн çăрасем те, пралук

картисем те—пурте вăйсăр, тĕрексĕр, вĕсем пурĕ пĕрех ишĕлессĕ. Хĕвелтухăçри ĕç хĕрарăмне, вăл çĕкленнинђе пĕтĕм тĕнђипех комунисăм çĕнтересси тĕкĕр (куçкĕски) çинђи пек лайăх курăнаť.

---

Хакĕ 18 пус.